Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

42 (7896) № ✻ Шӑмат кун, 2011 ҫулхи июнь (ҫӗртме) уйӑхӗн 4-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Чӑх-чӗп фабрикинче вӑй хурать

Муркаш енри ӗҫчен-сем хӑйсен пултарулӑхӗ-пе вуншар ҫул ӗнтӗ рес-публикӑра ырӑ ят тытса тӑраҫҫӗ.

Н. Ванеркин ертсе пы-ракан «Муркашри чӑх-чӗп фабрики» уҫӑ акционерлӑ общество ҫӑмарта туса илессине ҫулсеренех ӳстерсе пырать. Ҫакна валли пӗлтӗр кӑна кунта чӑхсене нумай яруслӑ оборудованисенче тытма 2 цеха модернизациленӗ. Ҫулталӑк хушшинче фаб-рика ӗҫченӗсем чӑх какай-не сутуилӗве кӑлараччен тирпейлемелли цеха ӗҫе кӗртнӗ. Ҫак ҫӗнӗлӗхсем фабрикӑна иртнӗ ҫул ҫӑмарта туса илессине унчченхинчен 1,8 процент ӳстерсе 58 миллион шту-ка ҫитерме май панӑ.

Эсир сӑн ӳкерчӗкре ку-ракан Роза Евгеньевна Краснова чӑх пӑхаканӑн фабрикӑри ӗҫ стажӗ 18 ҫул. Мӑшӑрӗпе Сергей Владимировичпа вӗсем 33 пин пуҫ ытла чӑх-чӗп пӑхаҫҫӗ. Кунсерен кашни чӑх пуҫне пӗршер ҫӑмар-тана яхӑн илеҫҫӗ.

– Тӑватӑ ярусла обору-довани вырнаҫтариччен эпир ҫак сарайӗнче 12 пине яхӑн чӑх ҫеҫ тыт-наччӗ. Фабрика ертӳсисен

Ӗҫре ырӑпа палӑракансем



тавракурӑмне пула цеха сармасӑрах чӑхсен йыш-не ӳстертӗмӗр. Ҫӑмарта илесси те халӗ виҫӗ хута яхӑн ытларах. Ҫӗнӗ тех-нологисене пурнӑҫа кӗртни газ, электричество тӑкакӗсене те сахаллатрӗ. Ҫапла вара тупӑш ӳсни куҫ умӗнче. Ӑна кура ӗҫлес кӑмӑл та пысӑк, – терӗ тирпейлӗ цех тӑрӑх иртнӗ май Роза Евгеньев-на.

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивӗҫнӗ

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2011 ҫулхи май-ӑн 11-мӗшӗнчи 407 № йышӑнӑвӗпе сывлӑх сыхлавӗн-чи ҫитӗнӳсемшӗн тата тӳрӗ кӑмӑлпа нумай ҫул ӗҫленӗшӗн «Муркашри тӗп больница» сывлӑх сыхлавӗн муниципаллӑ учрежденийӗнчи акушер уйрӑмӗн меди-цина сестрине **Алевтина Клементьевна АГАПОВӐНА**, участокри медицина сестрине **Ираида Юрьевна АТЛАС-КИНӐНА**, хирурги уйрӑмӗн операци медицина сестри-не **Галина Николаевна ВИКТОРОВӐНА** район админис-трацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Район уй-хирӗсенче

## Ака вӗҫленчӗ

Хаҫата пичете хатӗрленӗ тӗле районти ҫӗр ӗҫченӗ-сем тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене акса пӗтернӗччӗ ӗнтӗ. Ҫапла вара ҫуртрисем кӑҫал районӗ-пе 9333 гектар (107 процент) йышӑнчӗҫ. Уйрӑмах пы-сӑк лаптӑксем (600-шер гектар ытла) Ильич яч. хис., «Свобода», Суворов яч. хис., «Ударник» хуҫалӑхсенче.

Ҫӗртме уйӑхӗн 3-мӗшӗ тӗлне районти хуҫалӑхсем пурӗ 1743 гектар ҫинче пӗр ҫул ӳсекен курӑксем акса хӑварнӑ. Ку вӑл малтан палӑртнин 101 процентӗ.

## Ҫӗр улмипе пахча ҫимӗҫ

Тырӑ-пулӑ акас ӗҫсем вӗҫленнӗ май хуҫалӑхсем ҫӗр улмипе пахча ҫимӗҫ лартас ӗҫсене кӳлӗнчӗҫ. Ҫурхи ака-суха ӗҫӗсен планӗпе килӗшуллӗн кӑҫал районти ҫӗр ӗҫченӗн «иккӗмӗш ҫӑкӑра» 1253 гектар ҫинче лартса хӑвармалла. Ӗнерхи кун тӗлне плана 92 процент (1148 гектар) пурнӑҫланӑ. Чи пысӑк лаптӑксем (200 – 130 гек-тар) «Ударник», «Свобода», «ВаСем» хуҫалӑхсенче.

Иртнӗ кун тӗлне районти хуҫалӑхсем 155 гектар ҫинче (113 процент) пахча ҫимӗҫ лартнӑ.

## Ыранхи тухӑҫшӑн

Ҫӗр ӗҫӗнче ҫур акирен пуҫласа хура кӗркуннеччен пӗр ӗҫ тепринпе тачӑ ҫыхӑнса пырать. Ҫапла вара ыранхи кунпа пурӑнакансем паян хирсенче ҫум курӑк-ӗпе тата уй-хир культурисен сӑтӑрҫисемпе кӗрешес ӗҫе кӳлӗнчӗҫ. Ӗнерхи куна районта пурӗ 2010 гектар ҫинче тыр-пул калчисене ҫум курӑкӗнчен химилле майпа хӳтӗлес ӗҫсене ирттернӗ. Кунта уйрӑмах ӑнӑҫлӑ ӗҫле-кенсем хушшинче «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрики, «Свобода», «ВаСем», «Колос», «Восток» хуҫалӑхсене палӑртмалла.

Ҫум курӑкӗпе тата сӑтӑрҫӑсемпе кӗрешес ӗҫсем малалла пыраҫҫӗ.

**А. ПЕТРОВ.**

Раҫҫейре

## Чи пӗчӗк ӗҫ укҫи – 4611 тенкӗ

Июнӗн 1-мӗшӗнчен ӗҫ укҫин чи пӗчӗк виҫи (МРОТ) 4611 тенкӗпе тан-лашать. Ку таранччен ӗҫ укҫин чи пӗчӗк виҫи 4330 тенкӗ пулнӑ. Ӑна 2009 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен вӑя кӗртнӗ. Унччен вара, 2007 ҫултан пуҫласа уйӑхсерен ӗҫ укҫине 2,3 пин тенкӗрен пӗчӗкрех тӳлеме юраман.

Ӗҫ укҫин чи пӗчӗк виҫи пурӑнмал-ли минимумран пӗчӗк пулмасть. Ҫапла ҫырса хунӑ Ӗҫ кодексӗнче.

## Смотр-конкурс иртет

Район администрацийӗнче

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю. Иванов ҫу уйӑхӗн 25-мӗшӗнче 457-А номерлӗ йышӑну ҫине алӑ пуснӑ. Йышӑну район территорийӗн-че ҫулсерен тирпей-илем кӗртессипе ирттерекен смотр-конкурс пирки. Рай-онта ҫак мероприяти Чӑваш Республ-ликин Министрсен Кабинечӗн 2005 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче йышӑннӑ «Чӑ-ваш Республикинче тирпей-илем кӗртессипе тата йывӑҫсем лартасси-пе ҫулсерен смотр-конкурс ирттерес-си ҫинчен» йышӑнӑвӗпе килӗшуллӗн пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Ҫӳлерех каланине шута илсе рай-он администрацийӗн пуҫлӑхӗ тирпей-илем кӗртессипе ирттерекен кӑҫалхи смотр-конкурсӑн чиккисене ҫу уйӑхӗн 25-мӗшӗнчен ҫурла уйӑхӗн 1-мӗшӗччен палӑртнӑ. Ӑна валли поло-жени ҫирӗплетнӗ, комисси йӗркеленӗ.

Комиссие район администра-цийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – капиталлӑ строительство, архитектура тата пу-рӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ ху-ҫалӑх управленийӗн ертӳҫи В.Г. Ники-тин ертсе пырать.

**Хамӑр инф.**

## Йӳҫкассинче чиркӳ ӗҫлеме пуҫларӗ



Иртнӗ кӗҫнерни кун пра-вослави тӗнне ӗненекен-сем Христос Турӑ ҫӳле ҫӗкленнине паллӑ турӗҫ. Ҫак кун Йӳҫкассинчи Хрис-тос Турӑ ҫӳле ҫӗкленнин чиркӗвӗнче шыва светить туса пӗрремӗш кӗлӗ иртрӗ. Чиркӗве ҫак кун халӑх йышлӑ пуҫтарӑнчӗ: ватти-сем те, ҫамрӑксем те, ача-сем те. Уяв кӗллине ҫавӑн пекех Етӗрне хулин благо-чиннӑйӗ Сергий атте, рай-он пуҫлӑхӗ, Ильич яч. хис. хуҫалӑх ертӳҫи И.В. Нико-лаев, район администра-цийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов мӑшӑрӗпе Алевтина Григо-рьевнӑпа, Йӳҫкасси ял тӑ-рӑхӗн пуҫлӑхӗ С.Н. Иванов, «Ударник» хуҫалӑх ертӳҫи П.П. Давыдов, Йӳҫкасси чиркӗвӗн старости З.М. Ку-тузов тата ыттисем те килчӗҫ.

Кӗлӗ хыҫҫӑн район ад-министрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов тата «Удар-ник» хуҫалӑх ертӳҫи П.П. Давыдов Николай ат-тене тата чиркӗве ҫӳре-кенсене Христос Турӑ ҫӳле ҫӗкленнӗ праҫник ячӗпе тата Йӳҫкассинчи чиркӳре кӗлӗсем ирттер-ме пуҫланӑ ятпа салам-ларӗҫ. Юрий Александро-вич чиркӗве чӑвашла Биб-ли парнелерӗ.

Чиркӗве килекенсем ҫак кун Йӳҫкассинчи чиркӳ ӗҫлеме пуҫланишӗн чун-тан савӑнни палӑрчӗ. Ҫак ялти шкултан 1961 ҫулта вӗренсе тухнӑ А.Н. Ники-тин чиркӗве Шупашкартан ятарласах килнӗ.

– Чӑннипех савӑнатӑп чиркӳ ӗҫлеме пуҫланӑ-шӑн. Ӑна тума та май килнӗ таран пулӑшрӑм, – терӗ вӑл.

Аркадий Никитич ин-женер-металлург. Шу-пашкарти промтрактор-сем тӑвакан заводра ӗмӗр тӑршшӗпех ӗҫленӗ. Сам-бо енӗпе спорт мастерӗн кандидачӗ, ҫак енӗпех тренер та. Тӳрех килмен ун патне пурнӑҫра хӑй тунӑ ҫак ҫитӗнӳсем. Служ-бӑра шыв айӗнчи лодкӑпа ҫӳренӗ. Йывӑрлӑхран хӑ-раман. Каярахпа пӗр вӑ-хӑт эрех серепине ҫак-ланнӑ вӑхӑт та пулнӑ.

– Хама ҫак сиенлӗ йӑ-ларан хӑтӑлма пулӑшма ыйтаттӑм Турӑран. Илтрӗ. Пулӑшрӗ. Ҫын чун-чӗре-рен ӗненсе Турӑран пулӑ-шу ыйтсан, вӑл илтет, пу-лӑшать, – тет вӑл.

Йӳҫкасси шкулӗнче ӗмӗр тӑршшӗпех вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентнӗ А.Н. Васильева та питӗ кӑмӑллӑ чиркӳ ӗҫлеме пуҫланӑшӑн. Чир-кӗве вӑл хӑй тӗрленӗ ту-рӑшсене парнелерӗ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Вӗрентӳ

## Муркашсем те грант ҫӗнсе илнӗ

Республикӑри чи лайӑх вӗрентӳ учрежденийӗсене тата чи лайӑх педагогсене ҫулсеренех грант парса хавхалан-тараҫҫӗ. Кӑҫал та гранта тивӗҫнисен шучӗ пӗчӗк мар.

Республикӑри конкурсра 5 шкул, шкулччен пӗлӳ па-ракан 13 учреждени, хушма пӗлӳ паракан 2 учреждени 200 пин тенкӗлӗх грантсем ҫӗнсе илнӗ. Вӗсен шутӗнче – Мур-кашри «Солнышко» ача сачӗ те.

Чӑваш Республикин Президенчӗн 20 пин тенкӗлӗх грантне шкулччен пӗлӳ паракан 20 педагог тата хушма пӗлӳ паракан 10 педагог тивӗҫнӗ. Ҫак пултарулла ӗҫчен-сен йышне Отарккӑри «Малыш» ача садӗнче вӑй хуракан Валентина Валериановна Гусева логопед-учитель те кӗме пултарнӑ.

Президентӑн 200 пин тенкӗлӗх грантне ҫӗнсе илес-сишӗн пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкулсенче ӗҫлекен 118 вӗрентекен тупӑшнӑ. Кунта та Муркашсен мӑнаҫланмал-ли пур. Оринкинти вӑтам шкулта истори предметне вӗрен-текен Валентина Ивановна Алексеева – республикӑри 11 ҫӗнтерӳҫӗрен пӗри.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпӑр!

Хаклӑ мӑшӑра, юратнӑ аттене, кӑмӑллӑ асаттене, хисеплӗ тӑвана – Мӑн Токшик ялӗнче пурӑнакан **Валериан Якимо-вич ЯКИМОВА** 80 ҫул тултарнӑ ятпа чӗре-рен тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, кун-ҫулу вӑрӑм килтӗр. Ачусен, мӑнуксен хаваслӑ сассине илтсе ырлӑхне курса савӑнмалла пултӑр.



Сӑл куҫне валакӗ кирлӗ
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхма.
Аттеҫӗм пире эс кирлӗ
Туслӑ йышпа пурӑнма.

**Пысӑк салампа: мӑшӑрӗ, ачисем, кинӗ-сем, кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, тӑванӗсем.**

## Уяв ячĕпе сире!

Чăваш Республикинчи ачасен прависем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйăн территори представителĕ пулнă май хамăр районти мĕн пур çынсене Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чĕререн саламлатăп! Çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçпе çыхăннисене пурне те ăнăçу, чăтăмлăх тата тимлĕх, Муркаш енĕн çамрăк ĕçченĕсене вара сывлăх, ăнăçу тата çуллахи лайăх кану сунатăп!

**Н. ВАНЕРКИН,**
**«Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕ.**

Эсир пĕлесшĕнччĕ

## Хушма айăплавран хăтарма пултараççĕ

Прокуратурăна айăпланакан Р. гражданин ыйтупа пычĕ. Автомобильпе пынă май унăн айăпĕпе çул çинче авари пулнă. Водителе РФ Уголовнăй кодексăн 2-мĕш пайĕн 264-мĕш статйипе айăпласа 2 çуллăха ирĕкрен хăтарма, çак тапхăра поселени колонийĕнче ирттерме, кунпа пĕрлех хушма айăплав шучĕпе 2 çуллăха транспорт хатĕрĕпе çӳремелли правăсăр хăварма йышăннă пулнă. Унăн вăхăт çитмесĕрех условлă майпа ирĕке тухма вăхăт çитет. Вăхăт çитмесĕрех условлă ирĕке кăларасси пирки йышăну тунă чухне суд хушма айăплавран та хăтарма тивĕç-и?

Кунта хуравĕ çапла. РФ Уголовнăй кодексăн 79-мĕш статйипе килĕшӳллĕн суд айăпланакана хушма айăплавран пĕтĕмпех е кăштах хăтарсан та, хăтармасан та пултарать. Судсем кун пирки йышăну тунă чухне преступлени тăвасси наркотиксемпе е алкогольпе çыхăннине, сывлăх шайне, çемьери лару-тăрăва, профессие, ирĕкрен хăтарнă вырăнтан таврăнсан ĕçе вырнаçма май пуррине шута илеççĕ.

**В. ВЫРАСТАЙКИН,**
**ЧР Шупашкар хула прокурорĕн тӳрленмелли учреждениесенче саккунсене мĕнле пăхăннине тĕрĕслесе тăрас енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

Ачалăх тĕнчи

## Ăсталăх ĕçре туптанать



***Сăн ӳкерчĕкре эсир «Путене» ача сачĕн ĕçченне, ясли ӳсĕмĕнчи ушкăнри ачасен воспитательне Эльвира Германовна Любимовăна куратăр. Çулĕсемпе вăл çамрăк-ха, коллективра та нумаях мар. Апла пулин те аслисенчен вĕренсе пыни, ачасене юратни ăна ĕç мелĕсене ăнăçлă хăнăхса пыма, воспитателĕн çăмăл мар профессине алла илме пулăшаççĕ.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Редакци почтинчен

## Пултарулăхпа палăрать

Муркаш çĕрĕ пултаруллă та хастар çынсемпе пуян. Вĕсем район экономикине аталантарассишĕн, унăн ятне-сумне çĕклессишĕн тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ.

Çавăн пек çынсенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ Юрий Нестерович Жуков. Вăл кĕвĕленĕ юрăсене районта кăна мар, республика шайĕнче те кăмăлласа йышăнаççĕ, пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен репертуарĕсене кĕртме тăрăшаççĕ.

Питĕ кăмăллă та вашават çын Юрий Нестерович. Çынна итлеме пĕлет, çĕнĕ юрăсем вĕрентнĕ чухне питĕ тăрăшса ăнлантарать. Районти Культура çуртĕнче 3 хор коллективне ертсе пынă май унăн пушă вăхăчĕ те çук темелле. Апла пулин те вăл çĕнĕ кĕвĕсем хайлама та вăхăт тупать.

Пултаруллă ĕçчен нумаях пулмасть хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Çав ятпа ăна саламланă май малашне ырлăх-сывлăх, пултарулăх ĕçĕ-хĕлĕнче ăнăçу сунас килет. Малашне те савăнтартăр вăл хăйĕн пултарулăхĕпе çынсене.

**В. СЕРГЕЕВ.**

Çурлатри ялĕ.

Статья авторĕ йăнăшать

Район хаçачĕн иртнĕ номерĕсенче Н. Ершовăн «Иккĕмĕш Васкассинчи меценат» статйи пичетленнĕччĕ. Унта Хорнуй шкулĕн историйĕ пирки каласа pană çĕрте «Тăхăр çул вĕренмелли шкула хупичченех В.Г. Смирнов директор пирки следстви пуçланипе ăна ĕçрен хăтарнă...» тесе çырни пур. Çакă тĕрĕслĕхпе пĕр килмест. Тĕрĕссипе преступлени составĕ пулман пирки следстви ĕçĕсене чарса лартнă пулнă. Вячеслав Геннадьевич Смирнов вара шкул директорĕнчен хăйĕн ирĕкĕпе заявлени çырса тухнă. Ун пирки районти вĕрентӳ пайĕн хушусен (приказсен) кĕнекинче 2002 çулхи августăн 21-мĕшĕнче (№ 86 п1) çырса хуни пур.

# Йăл кулăпа çеç çиçчĕр ачасем



Июнĕн 1-мĕшĕнче пур ял тăрăхĕнче те Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалланă уявсем иртрĕç. Ĕç хыççăн çак кун район администрацийĕн çурчĕ умне ачасемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ те, аслашшĕ-асламăшĕ те питĕ йышлăн пуçтарăнчĕç. «Ачасем яланах хаваслăн кулччăр» ятпа иртнĕ уява килнĕ ачасем тискер чĕр чунсемпе сăн ӳкерттерчĕç, батут çинче сиксе-ярăнса савăнчĕç. Теттесем сутакансем патĕнче те кĕпĕрленсех тăчĕç вĕсем. Хăйсем мĕн тери телейли çинчен вара асфальт çине тунă сăн ӳкерчĕкĕсенче каласа пачĕç.

Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене, пуçтарăннисене пурне те чи малтан район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Вăл юлашки вăхăтра çĕршывра ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе нумай ĕç тунине палăртрĕ.

– Муркаш районĕ пирĕн пысăк çĕр чăмăрĕн пĕр пĕчĕк кĕтесĕ кăна пулсан та ав мĕн чухлĕ ача чупать паян уявра, – терĕ вăл. – Çулталăк пуçланнăранпа кăна кăçал нумай ачаллă çемьесен йышĕ ӳсрĕ: тата тепĕр 35 çемье 3 тата ытларах ачаллă пулса тăчĕ.

Юрий Александрович ачасене çу кунĕсене хаваслă ирттерме, садикран тухнисене вара 1 класран пуçласах лайăх паллăсемпе вĕренме ырă сунчĕ.

Чăваш Республикин Президент Администрацийĕ тата Правительстви ячĕпе Муркашсене Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен мĕнле шайра пулнине пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В.П. Димитриев саламларĕ. Вăл юлашки çулсенче кăна Чăваш енре ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене пулăшмалли 10 саккун йышăннине палăртрĕ. Муркашра пурăнакан Колесниковсен çемйине 0,06 га лаптăк çĕре çурт ларма тӳлевсĕр майпа харпăрлăха илме право паракан сертификат пачĕ. Людмила Алексеевнăпа Владимир Николаевич çемйинче 6 ача.

Пĕтĕмпе вара кăçалхи 5 уйăхра, ЗАГС пайĕн ертӳçи Е.Л. Иванова каланă тăрăх, 162 ача çуралнă. Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун кăна ЗАГС пайĕнче 4 арçын ачапа 2 хĕр ачана регистрациленĕ. Уявра Çатракасссинчи Елена Михайловнăпа Юрий Алексеевич Кожевниковсене ывăлĕн Сергейăн çурални çинчен калакан свидетельствине пачĕç.

Муркаш ял тăрăхĕнче пурăнакан Галина Вячеславовнăпа Олег Валерианович Лоцмановсен халĕ 3 ача ĕнтĕ. Пĕчĕк Настенька ашшĕпе тата амăшĕпе пĕрле уява хăйĕн пĕрремĕш документне илме «килнĕ».

Елена Львовна июнĕн 1-мĕшĕнче хăйсен çуралнă кунĕсене паллă тăвакан 7 ачана парнесем пачĕ.

Пуçтарăннисене уяв ячĕпе çавăн пекех ачасен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен Чăваш Республикинчи Муркаш районĕ тăрăх уполномоченнăйĕн территори представителĕ, «Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществин ертӳçи Н.Г. Ванеркин, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин саламларĕç.

Çак кун уява килнĕ ачасенчен кашниех пылак парнене тивĕçрĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумĕ, «РГС-Поволжье» - «Главное управление по Чувашской Республике» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн филиалĕн Муркашри страхлакан уйрăмĕн ертӳçи В.И. Вязов 3 боксера страхлани çинчен калакан свидетельствăна, «Россельхозбанк» акционерсен уçă обществин Муркашри хушма офисĕн управляющийĕ И.В. Павлова «Солнышко» тата «Путене» ача сачĕсене парнесем пачĕ.

Мĕн тĕрлĕ ăмăрту иртмерĕ пулĕ уявра. «Чи хитре ача кӳми», ӳкерчĕксен конкурсне хутшăнакансем парнеллĕ пулчĕç. «Чи хитре велосипед», «Суперроллер» конкурссене те ачасем хаваспах хутшăнчĕç. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн ертӳçи А.Н. Куликов вĕсене пурне те çуллахи каникул тăршшĕпех бассейна тӳлевсĕр çӳреме ирĕк паракан абонементсем парнелерĕ. Çамрăк боксерсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Кăçал ача садĕнчен 250 ача тухрĕ. Садик выпускникĕсен балĕ иртрĕ уявра.

Çавăн пекех «Ольга» парикмахерски (О.А. Афанасьева), «Свадебный салон» (Л.А. Колесникова) пулăшнипе ачасен прическисене, каçхи уяв платйисене демонстрацилерĕç.

Уявра Муркашри искусство шкулĕн, «Солнышко», «Путене», «Мечта» ача сачĕсен воспитанникĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

Уяв ачасен дискотекипе вĕçленчĕ. «Расна» эстрада ушкăнĕ ачасен юррисене юрларĕ. Юлашкинчен тӳпене шарсем çĕкленчĕç, ачасен кăмăлне татах та хăпартрĕç.

Уява ирттерме пулăшнă спонсорсене те асăнса хăварасах килет: «Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществи (ертӳçи Н.Г. Ванеркин), Муркаш райпо канашĕн ертӳçи Б.В. Андреев, «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă обществи (ертӳçи В.Н. Семенов), «Рынок «Моргаушский» (директорĕ Е.Н. Субботин), «Блиц» такси (А. Кириллов), «Единая Россия» политика партийĕн районти уйрăмĕн «Молодая гвардия» организацийĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

**ЧЕБОКСАРСКИЙ КООПЕРАТИВНЫЙ ИНСТИТУТ (ФИЛИАЛ) РОССИЙСКОГО УНИВЕРСИТЕТА КООПЕРАЦИИ**

В 2011 ГОДУ ОСУЩЕСТВЛЯЕТ ПРИЕМ ПО НАПРАВЛЕНИЯМ БАКАЛАВРИАТА И МАГИСТРАТУРЫ

| Наименование направления подготовки | Формы и сроки обучения | | | Вступительные испытания на очную, очно-заочную (вечернюю) и заочную с полным сроком формы (результаты ЕГЭ) |
|---|---|---|---|---|
| | Для лиц, имеющих среднее (полное) общее образование | Заочная | | |
| | | Бакалавриат | Магистратура | |
| **ЮРИСПРУДЕНЦИЯ** | **очная** – 4 года **очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 месяца **заочная** – 4 года 6 месяцев | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев **сокращенная на базе ВПО** – 3 года | 2 года 5 месяцев | русский язык, история, обществознание |
| **ЭКОНОМИКА** *Профиль*: Финансы и кредит | **очная** – 4 года **очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 месяца **заочная** – 4 года 6 месяцев | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев **сокращенная на базе ВПО** – 3 года | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, обществознание |
| *Профили:* Бухгалтерский учет, анализ и аудит; Экономика предприятий и организаций | **очная** – 4 года **заочная** – 4 года 6 месяцев | | | |
| *Профиль*: Налоги и налогообложение | **очная** – 4 года | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев | отсутствует | |
| *Профиль:* Мировая экономика | **очная** – 4 года | отсутствует | | |
| **МЕНЕДЖМЕНТ** *Профили:* Управление малым бизнесом; Управление человеческими ресурсами | **очная** – 4 года **очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 месяца **заочная** – 4 года 6 месяцев | **сокращенная на базе СПО** – 3 года и 6 месяцев **сокращенная на базе ВПО** – 3 года | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, обществознание |
| **ГОСУДАРСТВЕННОЕ И МУНИЦИПАЛЬНОЕ УПРАВЛЕНИЕ** | **очная** – 4 года **заочная** – 4 года 6 месяцев | **сокращенная на базе ВПО** – 3 года | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, обществознание |
| **ТОРГОВОЕ ДЕЛО** *Профили:* Коммерция; Маркетинг в торговле; Логистика в торговле | **очная** – 4 года **очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 месяца | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, обществознание |
| **ТОВАРОВЕДЕНИЕ** *Профили:* Товароведение и экспертиза товаров в области стандартизации, сертификации и управления качеством; Товарный менеджмент | **очная** – 4 года | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев | отсутствует | русский язык, математика, обществознание |
| **ПРИКЛАДНАЯ ИНФОРМАТИКА** *Профиль*: Экономика | **очная** – 4 года | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, физика |
| **ТЕХНОЛОГИЯ ПРОДУКЦИИ И ОРГАНИЗАЦИЯ ОБЩЕСТВЕННОГО ПИТАНИЯ** | **очная** – 4 года **заочная** – 4 года 6 месяцев | **сокращенная на базе СПО** – 3 года 6 месяцев | 2 года 5 месяцев | русский язык, математика, химия |
| **УПРАВЛЕНИЕ КАЧЕСТВОМ** | **очная** – 4 года | отсутствует | отсутствует | русский язык, математика, физика |

***Вступительные испытания для поступающих по заочной форме на базе среднего и высшего профессионального образования - собеседование по направлению. Для иностранных граждан и лиц, получивших среднее (полное) общее образование до 01.01.2009 – собеседование по соответствующим предметам.***

**ПРИЕМНАЯ КОМИССИЯ: (8352) 41-98-35,**
**ПОДГОТОВИТЕЛЬНЫЕ КУРСЫ: (8352) 41-97-35**
http//www.coop.chuvashia.ru, E-mail: priem@coop.chuvashia.ru
**АДРЕС:** г. Чебоксары, пр. М. Горького, 24
**ПРОЕЗД**: трол. № 3, 7, 12, 14, 21; авт. № 12-э, 15-э, 23, 101-с до остановки «Кооперативный институт»

*Лицензия серии АА № 002371, рег. № 2361 от 30.06.2009. Свидетельство о государственной аккредитации серии АА № 001732, рег. № 1697, в т.ч. по направлениям бакалавриата (приложение № 43), от 11.12.2008*

**НЕОБХОДИМЫЕ ДОКУМЕНТЫ:**
• заявление
• документ об образовании
Может быть представлено свидетельство о результатах ЕГЭ;
*Паспорт предъявляется лично.*

